27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
3
ВЫРСАРНИКУН
174(6669) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет çамрăкĕсен кĕрешӳпе ĕçри паттăрлăхĕ

Паян — Çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери 30-мĕш Кунĕ. Тĕнчери çамрăксем çак куна фашизма хирĕç хаяр çапăçу пынă вăхăтра паллă туса ирттереççĕ. Фашизм — этемлĕхĕн ирсĕр тăшманĕ. Фашизм этемлĕхе, çамрăклăха чуралăхпа пусмăрлăх кӳрет. Фашистла вăрă-хурахсен çулĕ миллионшар арçынсемпе хĕрарăмсен, çамрăксемпе ачасен юнĕпе, асаплăхпа, ялсемпе хуласен кăмрăкĕпе, этемлĕх халиччен курман преступленисемпе витĕннĕ.

Этемлĕхе фашистсен чуралăхĕпе пусмăрĕнчен хӳтĕлессишĕн пыракан аслă кĕрешӳвĕн тĕп йывăрлăхĕсене совет халăхĕ тӳссе ирттерет. Совет халăхĕ, хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн виçĕ çул ытла ĕнтĕ Отечественнăй аслă вăрçă туса пырса, фашистла вăрă-хурахсен ĕмĕтсĕр планĕсене аркатса тăкрĕ, ылханлă тăшмана хăйĕн вилĕм шăтăкĕ умне пырса тăратрĕ. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче те, Хĕрлĕ Çара тĕрек парса тăракан совет тылĕн хĕрӳ ĕç вучахĕнче те Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ совет çамрăкĕсем мухтава тивĕçлĕ паттăр ĕçсем тунипе палăрса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех комсомолецсемпе çамрăксем, алла хĕçпăшал тытса, тăван çĕршыва хӳтĕлеме çĕкленчĕç. Совет çамрăкĕсем пур çĕрте те хăйсем тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине пĕтĕм чун-чĕререн юратнине кăтартса параççĕ. Аслă вырăс халăхĕн, ытти тăванла халăхсен çамрăкĕсемпе пĕрле, пирĕн чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсем те халăхăн историллĕ традицийĕсене чыслăн тытса пыраççĕ, орденлă Чăваш республикин ятне татах та çӳлерех çĕклеççĕ. Совет Союз Геройĕсен çемьинче чăваш халăхĕн çирĕм ытла ывăлĕ пур. Чăваш халăхĕ хăйĕн мухтавлă ывăлĕсен — Совет Союз Геройĕсен Орлов, Ефимов, Габайдулин, Васильев, Лаптев, Сапожников, Иванов, Кочетов, Яшин, Ахаев тата ытти юлташсен вилĕмсĕр ĕçĕсемпе тивĕçлипе савăнса мухтанать. Отечественнăй вăрçăра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн вунă пин ытла чăваш çамрăкне СССР орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă.

Чăваш çамрăкĕсен фронтсенчи паттăр ĕçĕсем тылри ĕççыннисене савăнтараççĕ, çĕнтерӳ сехетне çывхартма Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме хавхалантараççĕ. Ĕçре те çапăçури пекех! Çак туйăмпа ĕçлесе пурăнаççĕ халĕ совет ĕççыннисем, совет çамрăкĕсем. Вăрçă кунĕсенче, комсомолецсемпе çамрăк патриотсем пуçарнипе, икĕ-виçĕ норма тултарса ĕçлекенсен юхăмĕ анлăн саралчĕ, çамрăксен фронтовой бригадисем йышлăн ӳсрĕç. Пирĕн республикари предприятисемпе артельсенче комсомолецсемпе çамрăксен 450 бригади ĕçлет. Çав бригадăсем çамрăксен творчествăллă пултаруллăхне пĕтĕçтерсе мобилизацилеме май пароççĕ, çамрăк рабочисене вĕрентсе çитĕнтермелли шкул пулса тăраççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводри Савкин юлташ ертсе пыракан бригадăра нумаях пулмасть ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă çамрăксем ĕçлеççĕ. Апла пулин те бригада производство планне нихăçан та 400 процентран кая тултармасть. Кун пек тĕслĕхсене ытти предприятисемпе артельсенче те йышлăн куратпăр.

Ялти çамрăксем те колхозсемпе МТС-сенче тăван çĕршыва фронт умĕнчи тивĕçлĕхе тарăннăн туйса ĕçлеççĕ. Çĕршывпа фронта тырпул та боеприпас пекех кирлĕ. Колхоз çамрăкĕсем, çавна асра тытса, хăйсен пĕтĕм вăйне, пултаруллăхне тырпула тăкаксăр пухса кĕртес, государство умĕнчи обязательствăсене йăнăçлăн пурнăçлас ĕçе параççĕ. Республикăри МТС-сенче çамрăксен 53 бригади ĕçлет. Колхозсен уйхирĕсенче комсомолецсемпе çамрăксем организациленĕ 450 звено вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене вăйлă тырпул туса илмелли майсене кăтартса параççĕ.

Совет çамрăкĕсен пархатарлă ĕçĕ вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене йăнăçлăн çĕнтерме, промышленноçпа транспорта малалла аталантарма, социализмлă ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума, çапла вара Хĕрлĕ Çара вăрçă хатĕрĕсем, промышленноçа—чĕртаварсем ытлăн-çитлĕн парса тăма пулăшать.

Комсомолецсемпе çамрăксем фронтовиксен ачисене пулăшас, боевой техника тума укçа пухас, Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Республикăри çамрăк патриотсем фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонда 1.459.000 тенкĕ укçа пухса панă, çамрăк патриотсен укçипе «Чăваш Комсомолецĕ» ятлă самолетсен эскадрильи, «Чăваш Комсомолĕ» ятлă бронепоезд тата ытти тĕрлĕ боевой техника туса Хĕрлĕ Çар аллине панă.

Çитĕнӳсем сахал мар. Анчах аманнă нимĕç тискер кайăкне хăйĕн вилĕм шăтăкĕнче пĕтерсе тăкма, çĕнтерӳвĕн çутă та савăнăçлă кунне çывхартма вăйсене икĕ-виçĕ хут ӳстерсе ĕçлени кирлĕ. Аслă Сталин пире çитĕнӳсене ялан ӳстерсе пыма вĕрентет. Совет çамрăкĕсен паянхи хисеплĕ тивĕçĕ — пĕтĕм вăйсене хамăрăн пурнăçри историллĕ задачăна пурнăçа кĕртнĕ çĕре, ылханлă тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкнă çĕре мобилизацилесси пулать. Промышленноçпа транспортри комсомолецсемпе çамрăксен производство планне тултарассишĕн, продукци туса кăларассине ӳстерессишĕн иксĕлми вăй-хăватпа кĕрешмелле. Кашни çамрăк рабочи нормăна ирттерсе тултарма, стахановец пулма тивĕçлĕ. Апла пулсан техникăна, малта пыракансен опытне вĕренмелле, дисциплинăна çирĕппĕн пăхăнса ĕçлемелле.

Ялхуçалăхĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен хăйсен вăйне тырпулсене тăкаксăр пухса кĕртнĕ çĕре памалла. Колхоз уйхирĕсенче, итемсем çинче, государствăна пама тырă турттарнă çĕрте социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Комсомолецсемпе çамрăксен çамрăк ăрăва çирĕп пĕлӳ тата тĕрĕс воспитани парас тĕлĕшпе совет шкулне куллен тимлĕн пулăшса тăмалла.

Совет çамрăкĕсем умĕнче тăракан ответлă задачăсене йăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, комсомол организацийĕсен ĕçне вăйлатмалла, çамрăксене воспитани парас ĕçе çӳллĕ пусăма çĕклемелле. Ку ĕнтĕ парти организацийĕсене комсомола ертсе пырас тĕлĕшпе ĕçе татăклăнах лайăхлатма хушать.

Республикăри предприятисемпе колхоз уйхирĕсенчи çамрăксем! Хамăрăн фронтри улăп-паттăр пек тăвансене стахановла ĕçпе пулăшар, çапла вара çĕнтерӳ сехетне çывхартар!

Государствăна тырă памалли график вăл—фронт приказĕ

Йăна пĕр турткаланса тăмасăр, хуть те мĕн пулсан та пурнăçа кĕртмелле

1944 ÇУЛХИ СЕНТЯБРĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ВЫРСА ПУХАС ТАТА ЫРАШ АКАС ĔÇ МЕНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Р. ЙОНСЕМ	Тырă вырни	Капан хывни	Çапни	Ыраш акни
Чурачăк	93,4	43,1	31,3	100,0
Шупашкар	91,7	38,1	29,0	101,3
Калинино	91,1	29,5	18,7	101,3
Вăрнар	87,9	37,0	29,5	101,0
Красноармейски	87,8	26,3	25,9	104,2
Çĕрпӳ	87,8	36,1	29,4	102,7
Элĕк	87,3	30,9	23,7	100,3
Сĕнтĕрвăрри	87,3	42,1	29,7	100,2
Сĕнтĕр	86,3	35,9	31,1	100,3
Канаш	86,1	30,8	25,5	85,0
Муркаш	85,6	28,7	24,1	110,9
Етĕрне	85,4	42,5	24,6	85,3
Советски	83,9	34,7	29,9	101,1
Октябрьски	82,8	37,7	27,2	97,8
Чкаловски	82,1	34,8	21,7	69,3
Куславкка	82,0	37,3	30,3	96,2
Елчĕк	81,8	32,2	21,3	96,9
Вăрмар	81,6	37,7	27,2	100,1
Шăхасан	81,1	26,8	23,4	101,4
Ишлей	77,8	34,0	27,9	99,1
Комсомольски	77,3	39,8	26,4	72,0
Хĕрлĕ Чутай	76,3	37,4	30,7	73,3
Пăрачкав	73,8	67,2	35,4	53,2
Йĕпреç	72,8	38,5	31,6	73,3
Тăвай	71,9	33,0	26,3	83,0
Первомайски	71,0	35,6	30,1	70,4
Шăмăршă	70,8	55,8	14,6	74,4
Çĕмĕрле	69,9	55,6	31,2	67,2
Улатăр	64,2	45,0	29,8	41,0
Кувакино	57,3	52,6	25,0	49,8

Кĕрхи çĕртме тума тытăнмалла

Республикăри чылай колхозсем, ыраш акса пĕтерсе, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пуçăнчĕç. Елчĕк районĕнчи «Марс», «Осоавиахим», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те пикенсех кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Августăн 31-мĕшĕ тĕлне Елчĕк районĕнчи колхозсем 596 гектар ытла сухаланă. Вăрмар, Калинино, Красноармейски районсенчи колхозсем те кĕрхи çĕртме тума тытăннă. Советски районри колхозсем 485 гектар тунă.

Анчах республикипе илсен, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пачах тытăнман районсем те нумай-ха. Улатăр, Элĕк, Йĕпреç, Канаш, Шăмăршă, Пăрачкав, Кувакино районĕсенчи колхозсем кĕрхи çĕртме пĕр гектар та туман. Çĕрпӳ районĕнче пурĕ те 8 колхоз кăна кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пуçăннă. Паянхи кун тĕлне кунта 163 гектар сухаланă. Районри колхозсен график тăрăх паянхи кун тĕлне 460 гектар тумалла. «13 лет Октября», «Актай», «Верный путь» колхозсем эрне каяллах кĕрхи çĕртмене тытăнма пултарнă, мĕншĕн тесен çав колхозсенче туртăм вăйĕ те, çынсем те çителĕклĕ.

МТС-ри тракторсем те çĕртме тăвас ĕçе ытла та ерипен хутшăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне пĕр МТС та кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе тивĕçлипе хутшăнман. Кĕрхи çĕртме туни килес çулхи тырпул тухăçлăхĕшĕн кĕрешни пулать. Кашни колхозăн кĕрхи çĕртме тума халех тытăнмалла.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешекен звено

Вĕсем вунвиççĕн. Пурте уйхир ĕçне юратакан хастар çамрăксем. Çавăнпа вĕсем ĕçлекен звенона вăйлă тырпул звени теççĕ. [illegible] Тислĕк турттарнă, акмалли участоксене палăртса хунă, вăрлăх тасатнă.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешекен звенона комсомолăн «Электросвет» колхозри пуçламăш организацийĕ туса хунă. [illegible] 3,5 гектар [illegible] 1,5 гектар [illegible] тата 4 гектар çĕрулми лартса хăварнă. Вĕсем агротехникăна çирĕп пăхăнса пынă, [illegible] удобрени тăкса çемçетнĕ.

[illegible]

Звенона ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ Таисия Карпова ертсе пырать. [illegible]

[illegible] ӳсрĕ. «Пирĕн звено ӳстернĕ тырă гектартан çĕр пăтран кая мар тухать», — теççĕ çамрăксем. Вĕсем хăйсем ӳстернĕ тырра [illegible] çапасса та уйрăмăн çапаççĕ.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе [illegible] шутлать. [illegible] килес çул [illegible] çирĕм пăтран [illegible] Вĕсем [illegible] тата вырăнти [illegible] ыраш акса [illegible] акасса малалла [illegible].

[illegible] пухса кĕртес [illegible] пачĕç. Вĕсем [illegible] тыррисем выр[illegible] пĕрлех, [illegible] Агитатор-комсомолец [illegible] колхозниксене кашни [illegible] калаçусем [illegible] Иван Сергеев, [illegible] тырă [illegible] государствăна кĕçех [illegible].

[illegible] авторитечĕ пысăк. [illegible] кунран [illegible] Комсомо[illegible] союзра тăман [illegible] вĕсем патне [illegible] ĕç пынă [illegible] илчĕç.

Я. СИГАЕВ.

«Электросвет» колхоз, Советски район.

Колхозри дисциплина ĕç тухăçлăхне ӳстерет

Кирек-мĕнле ĕçе пурнăçлас пулсан та, ăна организациплеме пĕлни, дисциплина çирĕп пулни кирлĕ. Вара пур ĕçе те вăхăтра, кал-каллăн тума пулать. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен эпир кашни çулах плансем тăватпăр, кашни колхознике уйрăм участоксем парса тухатпăр. Правленирен лара вĕнче çирĕплетнĕ хыççăн ĕç планĕсене колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплететпĕр. Çапла вара кашни колхозник хăйĕн мĕнле вырăнта, мĕн тумаллине тĕплĕн пĕлсе тăрать.

Калăпăр, кĕлте кӳме уйăрнă çынсем кĕлте турттарса капана хывса пĕтеричченех çав ĕçре пулаççĕ. Вĕсенчен кам та пулин урăх ĕçе правленирен ыйтмасăр каять пулсан, çав çынна хăйне çирĕплетсе паман участокра ĕçленĕшĕн ĕçкунĕ тӳлеместпĕр. Тырă вырма е авăн çампа уйăрнă колхозник е колхозница кĕлте кӳме каять пулсан, кĕлте кӳнĕшĕн ĕçкунĕ илмест. Мĕншĕн тесен, унăн хăйĕн уйăрăлмасăр ĕçлемелли участокĕ пур. Вăл хăйĕн участокĕнчен пăрăнсан унăн участокĕнче никам та ĕçлемест. Çак йĕрке çинчен пирĕн колхозри кашни ĕçлеме пултаракан колхозникпе колхозница тĕплĕн пĕлсе тăрать.

Ĕçре çирĕп дисциплина пулнине кура тата кашни колхозник хăйне çирĕплетсе панă участокра тăрăшса ĕçленĕ май, пирĕн «Шимар» колхоз колхозникĕсем ĕçкунĕсен минимумне пурте йĕркеллĕ тултарса пыраççĕ. Бригадир, ялхуçалăх ĕçĕсем пуçлансан, нихăçан та колхозниксен кантăкне пырса шаккамасть. Мĕншĕн тесен, кашни çакна лайăх пĕлет: колхозри дисциплинăна пăсни ялхуçалăх артелĕн уставне пăсни пулать. Çавăнпа та колхозник ир тăрать те часрах ĕçе васкать. Кашни пĕр-пĕринчен маларах тухма, ĕçкунĕсем ытларах ĕçлесе илме ĕмĕтленет, ăмăртса ĕçлет.

Çапла вара ĕçре çирĕп йĕркелĕх, дисциплина пулни кĕрхи тырăсене 8 кунта, çуртыррисене 8 кунта вырса пĕтерме май пачĕ. Çуртыррисем вырнă вăхăтра 61 çын ĕçленĕ, кĕлте кӳнĕ çĕрте 13 çын, суха тунă çĕрте 8 çын, сӳренĕ çĕрте 3 çын ĕçленĕ. Çав вăхăтрах электричество вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа 7 çын авăн çапнă. «БДО-34» молотилкăпа кунне 2 тонна вырăнне 3—4 тонна тырă çапса кăларнă. Унта ĕçлекенсен йышне кулленех пысăклатса пыратпăр, 10 лаша вăйлĕ электромотора тулли нагрузкăпа ĕçлеттеретпĕр.

Кĕрхи тырăсене планпа 10 кун хушшинче акса пĕтерме палăртнăччĕ. Сухаçăсем С. Ильин, Ф. Петрова, В. Аркадьев юлташсем ирхине нихăçан та бригадир ĕçе тухма каласса кĕтсе тăман. Ирех тухнă та каçчен ĕçленĕ, куллен 1,30-шер гектар сухаланă. Машинăпа акакан А. Петрова 13 ретлĕ сеялкăпа 5,5 гектар, В. Харитонова 7 ретлĕ сеялкăпа 3,5 гектар акса пычĕç. Вĕсем пĕрер смена çеç ĕçлерĕç. Мĕншĕн тесен туртăм вăйĕ çителĕксĕр пулни икĕ сменăпа ĕçлеме чăрмантарчĕ. Эпир 103,6 гектар çĕре августăн 21-мĕшĕнче акса пĕтертĕмĕр.

Хальхи вăхăтра эпир ĕç вăйĕпе çапла усă куратпăр: 1-мĕш бригадăри 3 колхозник вăрлăхлăх клевер турттарса тăрать, 8 çын ăна çапать. Клевер вăрри тĕшĕленĕ çĕрте 3 колхозница ĕçлет. Хамăр шутласа пăхнă тăрăх, 10 гектар çинчи клевертан 8 центнер вăрлăх тухать.

Паянхи кун тĕлне ыраш кĕлтисене 80 процент кӳнĕ, 40 гектар тыррине çапнă. Çапмалли 70 гектар çинчи тырă юлать, ăна сентябрь уйăхĕнче çапса пĕтеретпĕр.

Государствăна тырă парса татасси — пирĕн чи пысăк тивĕçсенчен пĕри. Ку тĕлĕшпе транспорт бригадинче 9 лав ĕçлет. Сентябрĕн 20—25-мĕшĕсем тĕлне государствăна тырă парса тататпăр.

Ĕçре дисциплинăна çӳллĕ пусăма лартни ялхуçалăх çулне йăнăçлăн вĕçлеме май парать. Кăçал «Четай» колхозпа ăмăртса, мала тухма ĕмĕт пур. Колхозниксем çавăншăн ырми-канми ĕçлеççĕ.

Е. КРЫЛОВ,

Красноармейски районри «Шимар» колхоз председателĕ.

Куславкка МТС-ĕ çулталăкри плана тултарнă

КУСЛАВККА, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Тракторсемпе тумалли çулталăкри ĕçсен планне (сухалани çине куçарса шутласан) МТС августăн 29-мĕшĕ тĕлне 100,4 процент тултарчĕ.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ,

МТС директорĕ.

РЕСПУБЛИКАРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ТĔЛĔШПЕ ПЫРАКАН АМĂРТĂВĔ

(СЕНТЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ ИЛНĔ СВЕДЕНИСЕМ ТĂРĂХ)

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Шупашкар	1
Çĕрпӳ	2
Сĕнтĕрвăрри	3
Вăрнар	4
Красноармейски	5
Шăхасан	6
Ишлей	7
Октябрьски	8
Куславкка	9
Чурачăк	10
Советски	11
Калинино	12
Сĕнтĕр	13
Канаш	14
Элĕк	15
Муркаш	16
Улатăр	17
Вăрмар	18
Етĕрне	19
Тăвай	20
Хĕрлĕ Чутай	21
Йĕпреç	22
Çĕмĕрле	23
Чкаловски	24
Елчĕк	25
Комсомольски	26
Пăрачкав	27
Кувакино	28
Первомайски	29
Шăмăршă	30

Государство умĕнчи парăмсене татнă

КАЛИНИНО, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхоз кăçал тырпулсене организованно пухса кĕртрĕ. Ыраш акассине те вăл ĕç планĕпе пăхнă срокра пурнăçларĕ. Тырă вырнă вăхăтрах кунта государствăна тырă памалли графика та ытлашшипех тултарса пычĕç. Августăн 31-мĕшĕ тĕлне государствăна 2953 пăт тырă панă, çакă вăл обязательствăпа кăтартнинчен 44 пăт ытларах пулать. Хĕрлĕ Çар фондне 456 пăт леçнĕ.

Колхозăн кăçал государствăна 130 центнер çĕрулми памалла, 30 центнерне леççе панă та ĕнтĕ. Государствăна сĕт-çу, ашкакай тата ытти продуктсем памалли обязательствăсене пĕтĕмпех парса татнă.

В. ЗАЙЦЕВ.

Гектартан 30 центнер тулă тухать

ЧКАЛОВСКОЕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозра çураки умĕн пысăк тухăçлă тырпул звенисем организацилерĕç. Манăн звенона 10 гектар çĕр çирĕплетсе пачĕç. Çак участок çинче эпир гектартан 20 центнертан кая мар тулă туса илме сăмах патăмăр.

Хамăр сăмаха пурнăçлас тесе, чи малтанах эпир вăрлăха лайăх тасатса, пĕрремĕш класлă кондицие çитерсе хутăмăр, çĕре тислĕк тăкса çемçетрĕмĕр. Сухаласа акассине те пĕтĕмпех агротехника кăтартнă тăрăх туса пытăмăр. Эпир акнă тулă вара лайăх та тикĕс шăтса тухрĕ. Эпир ăна яланах çумкурăксенчен тата кăмпаллă тулăсенчен тасатса пытăмăр. Анса пулнă тулла халь пĕр пĕрчĕ тăккаласа хăвармасăр вырса пуçтартăмăр. Сăнамалăх çапса пăхнă тăрăх, пирĕн кашни гектартан 30 центнер тулă тухрĕ.

Ф. НАУМОВ,

Вăйлă тырпул звенин звеновочĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Тырпул пухса кĕртессине вĕçлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх ирттересси çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ сентябрĕн 5-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче тĕштырăсене, вăрлăхлăх хăварнă курăксене, техникăллă культурăсене вырса пуçтарас тата кĕлте кӳрсе капана хывас ĕçе вĕçлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх ирттерме йышăннă.

ВКП(б) райкомĕсене фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх çинчен колхозсенче, бригадăсенче анлăн ăнлантарса пама, вунăкунлăх çинчен кашни колхознике, комбайнера, тракториста, совхозсен кашни рабочине пĕлтерме хушнă. Тырпулсене пухса кĕртме тата кĕлте кӳрсе капана хывма мĕнпур вăя мобилизацилесе, вăл ĕçсене анлă фронтпа тата мĕнпур май çемпе туса пымалла.

Тырпула вырса пуçтарнипе тата кĕлтесене капана хывнипе пĕр вăхăтрах, авăн çапас, вăрлăхлăх хăварнă курăксене шĕнĕлчес тата государствăна тырă парас ĕçсене хăвăртлатмалла, тырпул хатĕрлемелли плана Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кăтартнă срокра пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Августăн 31-мĕшĕнче Канаш хулинче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Канашри вагонсем юсакан заводри тата Хусан чугун çулĕ çинчи работниксене, производство заданийĕсене йăнăçлăн тултарса пынăшăн наградăланăскерсене, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене панă.

Хисеплĕ грамотăсем çул строительствин 1-мĕш номерлĕ участокĕнчи платник А. А. Александрова, Вăрмар станцийĕнчи весовщик В. А. Александров, Энĕшпуç разъезчĕн начальникĕ И. В. Альбатрос, Канаш деповĕнчи машинист П. В. Баданов, 5-мĕш дистанцинчи работница В. В. Васильева, Вăрнар станцинчи старши стрелочник Г. М. Доманин, Вăрмар станцийĕн начальникĕ П. И. Иванов тата ытти юлташсем, пĕтĕмпе 52 çын илнĕ.

Ун хыççăн Хисеплĕ грамотăсем Канашри вагонсем юсакан заводри газосварщик А. А. Архипов, токарь Е. В. Будкина, цех начальникĕ Г. М. Жебрак, слесарьсен бригадирĕ Л. Л. Иванюк, завод начальникĕн заместителĕ Н. К. Миронов, тимĕрçĕ Д. С. Сытник тата ытти юлташсем, пĕтĕмпе 28 çын илчĕç.

Наградăланисем, хăйсен ĕçне пысăка хурса хакланăшăн партипе правительствăна тав туса, малашне мухтавлă Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме сăмах пачĕç.

Юлашкинчен З. А. Андреева юлташ, наградăланисене саламласа, малашнехи ĕçре çитĕнӳсем тума ырă сунчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПЛОЕШТИ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — КАТИНА, НЕДЕЛЯ, ДЭРМЭНЕШТИ, БЕКЕНЕШТИ, БУЖОРЯНКА, ЖОЙЦА, ТЫНТОВА ятлă пысăк ялсем тата ПРАХОВА, КРИВИНА ятлă чугун çул станцийĕсем.

БУХАРЕСТ хулинчен кăнтăртарахра тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, ДУНАЙ шывĕ çине тухса пынă май, ДЖУРДЖУ, КЭЛЭРАШИ хулисене тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — СЭРУЛЕШТИ, ДОРМЭРУНТ, ДРАГОШ-ВОДЭ, РАДУ-НЕГРУ ятлă пысăк ялсем тата СЭРУЛЕШТИ, ПРЯСНА, ЛЕХЛИУ, СИГИРЯНУ, ДЭЛГА, ЧИМПАЦИ, ИВЭНЕШТИ, ЧЮЛНИЦА, СЕЧЕЛЯНУ, ЖИГЭЛИЯ, БЭРЭГАНУ, ФЕТЕШТИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

КОНСТАНЦА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Августăн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 30 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Висла шывĕн сылтăм хĕрринче Варшавăна юнашар ларакан Прагăран çурçĕрхĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре пĕр чаçри подразделенисем, сасартăк атакăласа, нимĕçсене чи çӳллĕ вырăнтан хĕссе кăларнă. Тăшман çав вырăна каялла туртса илме хăтланнă. Гитлеровецсен контратакисене сирсе янă. Нимĕçсен пехотине икĕ рота пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Плоешти хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă. Тăшман совет чаçĕсем малалла куçса пынине чарса лартма хăтланать. Вăл хăйĕн çĕмĕрсе тăкнă çарĕсен юлашкийĕсене çĕнĕлле ушкăнлама тата резервсем куçарса пыма вăхăт тупасшăн. Пирĕн танкистсемпе пехотинецсем нимĕçсене халăх пурăнакан чылай пунктсенчен хăваласа кăларнă. Пĕр соединени чаçĕсем гитлеровецсене пĕр батальон таран пĕтерсе тăкнă. Трофейсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет чаçĕсем, çав тери хăвăрт маневр туса, тăшман ушкăнне çавăрса илнĕ те пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна яхăн тыткăна илнĕ. 3 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 5 тупă тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Констанца хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем ращасене, хăмăшлăхсене тата çырма-çатрасене шăртласа тухнă, унта пытанса çӳрекен нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене яра-яра тытнă. Тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем турттарса пыракан темиçе обоза тытса илнĕ. Хăшпĕр уйрăм участоксенче тăшманăн пĕр-пĕринчен татăлса кайнă ушкăнĕсем хирĕç тăма хăтланнă. Тыткăна парăнма килĕшмен нимĕç отрячĕсене пирĕн чаçсем пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Шауляй (Шавли) хулинчен хĕвеланăçнерехре разведчиксем шыраса çӳренĕ. Пĕр участокра нимĕçсем, тупăсемпе минометсем персе тăнипе усă курса, пирĕн позицисене атакăланă. Кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн совет боецĕсем тăшмана малтанхи позици çине хăваласа янă, Тăшманăн 120 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр чаçри разведка ушкăнĕ тăшман позицийĕсене тапăннă, 5 пулемет, 3 миномет тытса илнĕ тата темиçе салтака тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕн летчикĕсем Чудь кӳллинче тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен десант баржине шыва путарнă.

* * *

Пирĕн çарсем нимĕçсен 10-мĕш армейски корпусĕн штабĕ августăн 6-мĕшĕнче кăларнă приказа тытса илнĕ. Çак корпус Балтика тăрăхĕнче татса илнĕ нимĕç çарĕсен шутĕнче тăрать. Хăйĕн приказĕнче нимĕçсен штабĕ çакна палăртса çырать: «Вырăссем нимĕçсене каялла чакараççĕ, çакăн тĕп сăлтавĕ пехота çапăçма килĕшменнинче. Германи пехотинче... çар çыннисем пăсăлса кайнă фактсем пулнă. Çакăн пек фактсене пĕтерсе лартас пулать, унсăрăн кунти çарсен пĕтĕм ушкăнĕ пĕтсе ларать».

Приказăн пĕрремĕш пунктĕнче çапла каланă: «Хăйсен чаçĕсенчен татăлса юлнă салтаксен хисепĕ питех те пысăк. Эпĕ çине тăрсах çакна тума хушатăп: хăй чаçĕнчен татăлса юлнă салтаксене вĕлереççĕ, çакăн çинчен чи кĕске вăхăт хушшинчех кашни салтака ăнлантарса памалла. Пур офицерсем те, чиновниксем те тата пӳлсе тăракан отрядсем те хăйсен чаçĕсенчен татăлса юлнă салтаксене тытса чарма тивĕçлĕ, ун пек салтаксене хăравçă тесе айăплама çар судне памалла, ун пек салтаксене судсем асаплантарса вĕлермелле тăваççĕ. Хĕçпăшал çухатнăшăн та çавăн пекех çирĕп айăпламалла». Анчах та нимĕçсен штабне çакăн пек хаяр наказанисем те çемçе тата питех те çителĕксĕр наказанисем пек туйăннă. Çав приказăн иккĕмĕш пунктĕнче çапла çырнă: «Дивизи командирĕн пункчĕ хыçĕнче тылра тытса чарнă кашни салтака ятарласа тунă команда тытнă тĕлтех персе пăрахать».

Нимĕçсен 10-мĕш корпус штабĕн çак приказĕ нумай япалана çутатса парать. Нимĕç çарĕнче дезертирсен хисепĕ кунсеренех ӳссе пырать. Нимĕç салтакĕсем, тĕрлĕ сăлтавсем тупса, çапăçуран пăрănса юлма тăрăшаççĕ, вĕсем хăйсен чаçĕсенчен татăлса юлаççĕ, тылра ĕç тупма тăрăшаççĕ. Гитлер командованийĕ хăйĕн çарĕсем пăсăлнине çавăн пек хаяр мерăсемпе чарма хăтланать, вăл çапла майсемпе салтаксене Германи аяла пулнă вăрçăра малалла та вăрçтарасшăн. Анчах та кун пек хăтланни вăл кăлăхах тăрăшни кăна. Гитлеровецсем темле мерăсем йышăнсан та, хăйсем пĕтсе ларасран хăтăлса юлайрас çук. Вĕсене «тигрсем», «пантерсем» тата «фердинандсем» те пулăшаймарĕç. Хăйсен салтакĕсене тата офицерĕсемпе генералĕсене йышлăн пере-пере пăрахни пачах та пулăшас çук ĕнтĕ.

Республикӑри шкулсенче

АЧАСЕНЕ ЛАЙӐХ ЙЫШӐНСА ИЛЧӖҪ

КАЛИНИНО, сентябрӗн 2-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри пур шкулсенче те вӗренӳ ҫулӗ йӗркеллӗ пуҫланчӗ. Нумай шкулсем вӗренекенсене лайӑх йышӑнса илчӗҫ. Район центрӗнчи вӑтам шкулти 2-мӗш класра вӗрентекен учительница А. Романова юлташ ачасем валли лайӑх вӗренме мӗн кирлисене малтанах тӗплӗн хатӗрлесе хунӑ. Классене сӗрсе тасаттарнӑ, кӑмакасене шураттарнӑ, партӑсемпе доскасене сӑрлаттарнӑ, учебниксемпе пособисене хатӗрленӗ.

— Ачасене ҫирӗп пӗлӳ парасси, — тет Романова юлташ, — вӗсене кӑмӑллӑ йышӑнса илнинчен те нумай килет. Ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнни ачасен ӑс-тӑнӗнче тимлӗн вӗренес, шкула пӗр сиктермесӗр ҫӳрес туйӑма вӑратать.

Романова юлташ вӗрентекен класа илнӗ ачасем малтанхи кунах пурте шкула пынӑ. Романова юлташ вӗсене вӗренӳ ҫулӗнчи задачӑсем ҫинчен, ачасем хӑйсене тыткаламалли йӗркесем ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Класра малтанхи уроксем йӗркеллӗ иртрӗҫ. Ачасем ыйтусем ҫине активлӑн ответлеҫҫӗ.

Вӗренӳ ҫулӗ Шуркассинчи пуҫламӗш шкулта тата ытти чылай шкулсенче те ӑнӑҫлӑн пуҫланчӗ. Ҫав шкулсенчи учительсемпе шкул директорӗсем хӑйсен ӗҫне фронта тивӗҫлӗ пек туса пырассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах Кӳлхӗрринчи, Уйкасри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсенчи работниксем хӑйсен ответлӑхне туймаҫҫӗ пулас-ха. Вӗсем ача ашшӗсемпе амӑшӗсене вӗренӳ ҫулӗ хӑҫан пуҫланасси ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарман, колхоз руководителӗсемпе калаҫман. Ҫавна пула вӗренӳ ҫулӗн 1-мӗш кунӗнче Кӳлхӗрри шкулне 31 ача, Ермошка шкулне 37 ача, Уйкас шкулне 31 ача пыман.

Асӑннӑ шкул работникӗсен, вӑхӑта вӑраха ямасӑр, мӗнпур вӗренме тивӗҫлӗ ачасене шкула явӑҫтармалла тӑвас пулать. Районӑҫ пайӗн те ҫав ӗҫрен пӑрӑнса тӑма юрамасть.

В. ЗАЙЦЕВ.

Ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме тӑрӑшатпӑр

СЕНТЕРВАРРИ, сентябрӗн 2-мӗшӗ. (Телефонпа). Вӗренӳ ҫулӗн малтанхи кунӗнче хулари шкулсене вӗренме илнӗ ачасенчен чылайӑшӗсем шкула пымарӗҫ. Ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн 1-мӗш класне 62 ача пымалла пулнӑ пулсан, 43 ача ҫеҫ пынӑ. Ытти классенче вӗренекенсем те пурте пыман. Ҫавӑн пекех вӑтам тата пуҫламӗш шкулсене те чылай ачасем пыман.

Ҫак ҫитменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе эпир ҫийӗнчех татӑклӑ мерӑсем йышӑнатпӑр. Шкул работникӗсем шкула пыман ача ашшӗсемпе амӑшӗсем патне ҫӳреҫҫӗ, ачасем мӗн сӑлтавпа шкула пыманнине пӗлеҫҫӗ. Вӗренекенсем валли тумтирсем тупса парас тӗлӗшпе сахал мар ӗҫсем турӑмӑр.

Шкул работникӗсем малашне те тимлӗн ӗҫлесен, эпир вӗренекенсене пурне те шкула явӑҫтарма пултаратпӑр.

А. ЕРМАКОВА.
Районӑҫ пайӗн заведующийӗ.

Шурча шкулӗнче

Паян кунӗ те ачасем кӗтнӗ пекех пулчӗ: уяр та ӑшӑ ҫанталӑк тӑрать.

Сакӑр сехет иртнӗ хыҫҫӑнах уяври пек таса тумтирсем тӑхӑннӑ ачасем шкул патне пухӑнма пуҫларӗҫ. Муркаш районӗнчи Шурча шкулӗ вӗсене ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнса илет. Акӑ ачасем патне шкул директорӗ Елизавета Ефименко тухрӗ. Вӑл ачасемпе тимлӗн калаҫать.

Уроксем пуҫланас вӑхӑт ҫитсен, ачасем классене вырнаҫса ларчӗҫ. Классем таса та ҫутӑ. Кӑмакасене пурпа шуратнӑ, стенасем ҫинче ҫулпуҫсен портречӗсем. Учительницӑсем малтанхи урокра ачасене шкулти йӗркесемпе паллаштарчӗҫ.

Шкула вӗренме илнӗ ачасем пурте тенӗ пекех пынӑ. 1-мӗш класа 27 ача пымалла. Вӗсем пурте вырӑнта. Ҫавӑн пекех 2-мӗшпе 3-мӗш классенче вӗренекенсем те пурте пухӑннӑ.

Уроксем пӗтнӗ хыҫҫӑн учительсем ачасене килте тата ял хушшинче хӑйсене мӗнле тыткаламалли ҫинчен каласа пачӗҫ.

(Хамӑр корр.).

Ростов облаҫӗнчи аслӑ шкулсене пурне те ҫӗнӗрен уҫнӑ

Ростов облаҫӗнчи вӑрҫӑччен пулнӑ аслӑ шкулсем пурте ҫӗнӗрен ӗҫлеме пуҫланӑ. Ростовра, Новочеркасскра, Таганрогра 14 аслӑ шкул уҫнӑ, ҫав шкулсенче — 40 факультет. Облаҫри аслӑ шкулсенче халь ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленсе ҫитеҫҫӗ. Пӗрремӗш курссене 3.000 ҫын ытла илмелле. (ТАСС).

ҪАМРӐК ХАСТАРЛӐХА ФРОНТА ПУЛӐШМА ПАРАР

Совет ҫамрӑкӗсем, вӗсемпе пӗрле мӗнпур совет халӑхӗ те, Пӗтӗм тӗнчери Ҫамрӑксен Кунне тӑваттӑмӗш хут ӗнтӗ Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче паллӑ тӑваҫҫӗ. Ҫак паллӑ кун кӑҫал Хӗрлӗ Ҫар чаплӑ ҫӗнтерӳсем тунӑ тапхӑрпа пӗр вӑхӑтра килет.

Вӑрҫӑ пӗтӗм совет халӑхӗн вӑйӗсене мобилизацилеме хушрӗ, тӗрлӗ йывӑрлӑхсем ҫуратрӗ. Совет ҫамрӑкӗсем, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, ҫав йывӑрлӑхсене чыслӑн тӳссе ирттерчӗҫ. Комсомолецсемпе совет ҫамрӑкӗсем, Ленин—Сталин партийӗ кӑтартса панисене пурнӑҫа кӗртсе пырса, хӑйсем пысӑк вӑй пулса тӑнине, ҫӗнтерӳшӗн фронтра та, тылра та паттӑр ӗҫсем тума пултарнине кӑтартса пачӗҫ.

Вӑрҫӑн пирвайхи кунӗсенчех темиҫе пин комсомолецпа ҫамрӑк патриотсем, алла хӗҫпӑшал тытса, тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн хӑюллӑн ҫапӑҫма пуҫларӗҫ. Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте Командованин приказне лайӑх пурнӑҫа кӗртнӗшӗн нумай пин комсомолецсемпе ҫамрӑксене Совет Союз Геройӗн ятне панӑ, СССР орденӗсемпе медалӗсене парса наградӑланӑ. Вӗсем хушшинче пирӗн чӑваш халӑхӗн ывӑл-хӗрӗсем те сахал мар. Совет Союзӗн Геройӗсем хушшинче комсомолӑн Чӑваш республикинчи организацийӗ ӳстернӗ ҫамрӑксем Орлов, Ефимов, Габайдулин, Сапожников, Поляков, Иванов тата ытти юлташсем пур.

Вӑрҫӑн пирвайхи кунӗсенчех тылра ӗҫлекен ҫӗршер пин комсомолецсемпе ҫамрӑк патриотсем Хӗрлӗ Ҫар валли вӑрҫӑ техники, боеприпассем ытларах туса кӑларассишӗн вӑйсене икӗ-виҫӗ хут ӳстерсе ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Икӗ-виҫӗ норма тултарса ӗҫлекенсен юхӑмӗ, комсомолецсемпе ҫамрӑксен фронтовой бригадисем ҫуралчӗҫ. Вӑл бригадӑсем ҫамрӑксен творчествӑллӑ пултарулӑхне пӗр ҫӗре пӗтӗҫтерсе мобилизацилеме пулӑшрӗҫ, ҫамрӑк рабочисене политикӑпа техника тӗлӗшӗнчен воспитани памалли шкул пулса тӑчӗҫ.

Ҫав чаплӑ юхӑм пирӗн орденлӑ Чӑваш республикинчи предприятисемпе артельсенче вӑйлӑн сарӑлчӗ. Хальхи вӑхӑтра предприятисенче комсомолецсемпе ҫамрӑксен 407 бригади ӗҫлет. Вӗсенчен ҫурри ытла фронтовой бригада ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Соловьева юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечӗн комсоргӗ пулса ӗҫлекен заводра комсомолецсемпе ҫамрӑксен 83 бригади пур. Вӗсенчен 35-шӗ фронтовой бригадӑсем. Сӑмахран, Филиппова юлташ бригади производство планне 258 процент тултарать. Комсомолӑн заводри организацинче тӑракан комсомолецсен хисепӗнчен 58 проценчӗ стахановецсем, 24 проценчӗ ударниксем шутланаҫҫӗ. Комсомолецсем хушшинче нормӑна тултарманнисем пачах та ҫук. Канашри вагонсем юсакан заводри Савкин юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригади производство планне нихӑҫан та 400 процентран кая тултарман. Вӑл бригада нумай пулмасть ФЗО шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксенчен тӑрать. Игумнова юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечӗн комсоргӗ пулса ӗҫлекен заводри Мисюк, Сергунин, Сорокин, Шереметьев юлташсен бригадисем плана 300 процентран кая мар пурнӑҫлаҫҫӗ. Сергунин юлташ бригади ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Республикӑри промысла коопераци артелӗсенче комсомолецсемпе ҫамрӑксен 43 бригади ӗҫлет. Иванова (Октябрьски районри Караньялӗнчи «Труд» артель), Туюкова (Вӑрмарти Осипенко ячӗпе тӑракан артель) юлташсен бригадисем ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Колхоз ялӗнчи ҫамрӑк патриотсем те фронта тивӗҫлӗ пек ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тырӑ боеприпас пекех кирлӗ пулнине лайӑх ӑнланаҫҫӗ вӗсем. Машинно-тракторнӑй станцисенчи ҫамрӑксен 53 бригади Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ. Малти вырӑна Елчӗк МТС-ӗнчи Струнков юлташ бригади хӑй аллинче тытса тӑрать. ВЛКСМ Центральный Комитечӗпе СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫамрӑксен тракторнӑй бригадисен, ҫамрӑк трактористсен ӑмӑртӑвӗн ҫураки вӑхӑтӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Шӑхасан МТС-ӗнчи И. Т. Тимофеев бригадине иккӗмӗш преми илме, Ишлей МТС-ӗнчи Н. И. Елахов бригадине виҫҫӗмӗш преми илме тата Ҫӗмӗрле МТС-ӗнчи тракториста Оськин юлташа преми илме кандидата тӑратнӑ.

Республикӑри колхозсен хирӗсенче вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешекен ҫамрӑксен звенисем 450 ытла ӗҫлеҫҫӗ. Звеньевой Василиса Степанова ячӗ республика тулашӗнче те паллӑ ӗнтӗ. ВЛКСМ Центральный Комитечӗпе СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешекен звеносен ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен малтанхи тапхӑрӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн Р. Петрова (Красноармейски районри «Красный Борденер» колхоз) тата Черкасова (Куславкка районӗнчи «Ударник» колхоз) юлташсен звенисене виҫҫӗмӗш преми илме кандидата тӑратнӑ.

Государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра тултарасси — колхозсен пӗрремӗш задачи пулса тӑрать. Вӑрнар районӗнчи колхозниксем государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем тӑратмалли плана октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарса ҫитерме сӑмах пачӗҫ. Вӑрнарсен паха пуҫарӑвне республикӑри пур районсем те йышӑнчӗҫ. Ҫак ответлӑ ӗҫе пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе колхозсене комсомолецсемпе ҫамрӑксем пысӑк пулӑшу параҫҫӗ. Комсомолецсем пуҫарнипе, государство валли тырӑ турттарас енӗпе воскресниксем ирттереҫҫӗ. Августӑн 27-мӗшӗнче воскресниксем Вӑрмар, Шупашкар, Красноармейски районсенче ирттернӗ. Вӑрмар районӗнче воскресник ирттернӗ кун ҫамрӑксен вӑйӗпе государствӑна 207 тонна тырӑ леҫсе панӑ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хӑйсен пуҫарулӑхне нихӑҫанхинчен те ытларах кӑтартса пачӗҫ. Комсомолецсем пуҫарнипе фронтовиксен ачисене пулӑшмалли фонд тунӑ, вӑл фонда 1.459.000 тенкӗ укҫа пухса панӑ. Республикӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксем пухнӑ укҫапа «Чӑваш Комсомолецӗ» ятлӑ самолетсен эскадрильине, «Чӑваш Комсомолӗ» ятлӑ бронепоезд, «Чӑваш пионерӗ» ятлӑ танк тунӑ. Республикӑри комсомол организацийӗсем всевобуч пункчӗсене Хӗрлӗ Ҫар валли лайӑх резервсем хатӗрлеме пулӑшаҫҫӗ.

Анчах тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларни йӑнӑш пулнӑ пулӗччӗ. Ҫӗршывпа фронт интересӗсем вӑйсене татах та ӳстерсе ӗҫлеме, мӗнпур резервсемпе тата майсемпе усӑ курма хушаҫҫӗ. Ҫакӑн ҫинчен пӗр минутӑлӑха та манма юрамасть. Промышленноҫпа транспортри комсомолецсемпе ҫамрӑксем халӗ хӑйсен техникӑллӑ пӗлӗвне, ӗҫри ӑсталӑхне ӳстерсе пырса, продукци ытларах туса кӑларассишӗн, ялти комсомолецсемпе ҫамрӑксем тырпулсене пӗр тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртессишӗн, государство умӗнчи обязательствӑсене срокра тултарассишӗн кӗрешме тивӗҫлӗ.

Комсомол организацийӗсен всевобуча пулӑшассине вӑйлатмалла, шкулсенчи вӗренӳ пахалӑхне лайӑхлатассишӗн куллен тимлӗн ӗҫлемелле. Ҫамрӑк ӑрӑва ҫирӗп пӗлӳ тата тӗрӗс воспитани парса ӳстересси — комсомолӑн политикӑллӑ задачи пулса тӑрать.

Пӗтӗм тӗнчери Ҫамрӑксен Кунӗнче совет ҫамрӑкӗсем, хӑйсем утса тухнӑ мухтавлӑ ҫула аса илсе, ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартассишӗн малашне татах хастарлӑн ӗҫлемелли майсене палӑртаҫҫӗ.

Совет ҫамрӑкӗсем, телейлӗ ҫамрӑклӑх туса панӑ тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешме вӑйсене пӗтӗҫтерер!

Г. ПЕТРУХИН.
ВЛКСМ Обкомӗн секретарӗ.

Чӑваш ҫамрӑкӗсем фронтра

Кашни кун мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар чаплӑ ҫӗнтерӳсем туни ҫинчен савӑнӑҫлӑ хыпарсем килеҫҫӗ. Совет Союзӗнчи нумай миллионлӑ халӑхсен ывӑл-хӗрӗсем Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче пулса, совет халӑхӗ панӑ хӑватлӑ хӗҫпӑшалпа нимӗҫ тискер кайӑкне вӑйлӑн пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Вӗсем хушшинче пирӗн чӑваш халӑхӗн ывӑл-хӗрӗсем те сахал мар. Вӗсем, пӗтӗм совет халӑхӗн ывӑл-хӗрӗсем пекех, тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗшӗн, никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн паттӑррӑн ҫапӑҫса, орденлӑ республика чысне ҫӳлте тытаҫҫӗ.

* * *

Ленинграда нимӗҫ захватчикӗсенчен хӳтӗленӗ кунсем совет халӑхӗн асӗнчен нихӑҫан та тухмӗҫ. Вӑл кунсем Хӗрлӗ Ҫар воинӗсен паттӑрлӑхӗпе хӑюлӑхне тата чӑтӑмлӑхне кӑтартакан чаплӑ примерсемпе палӑрса тӑраҫҫӗ.

...Хӗллехи шартлама сивӗ. Пӗр ирхине нимӗҫсем Ленинграда йывӑр артиллеририрен пеме пуҫланӑ. Снаряд пырса ӳкнипе ачасем пуранакан ҫурта вут хыпса илнӗ. Ҫуртран тухса ӗлкӗреймен ачасем ҫухӑрашнӑ. Вӗсене кирек мӗнле пулсан та вилӗмрен ҫӑлмалла. Ҫак шухӑшпа пирӗн земляк Илья Тимонин, Етӗрне районӗнчи Чурпай ялӗнче ҫуралса ӳснӗскер, ҫулӑм витӗр ачасене ҫуртран илсе тухма пуҫланӑ. Пӗр икӗ хутчен кӗрсе тухнӑ хыҫҫӑнах унӑн тумтирӗсене вут тивнӗ, ӳт-пӗвӗ пиҫе-пиҫе кайнӑ. Анчах вӑл ачасене пурне те ҫӑличченех ӗҫленӗ.

Врачсем Тимонина хӑйӗн суранӗсене юсама госпитале кайма хушнӑ. «Выртма вӑхӑт ҫук, аслӑ Ленин хули хӑрушлӑхра», тенӗ вӑл, хӑйне вырӑнтах хӑварма ыйтса.

Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене хӑватлӑн пырса ҫапса Ленинград патӗнчен ҫӑлса ывӑтнӑ кунсенче те Илья Тимонин паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ. Совет правительстви унӑн мухтава тивӗҫлӗ ӗҫӗсене пысӑка хурса хакланӑ. Халӗ лейтенант Илья Тимонин кӑкӑрӗ ҫинче III-мӗш степень Мухтав орденӗ тата «За отвагу», «За оборону Ленинграда» медальсем ялкӑшаҫҫӗ.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

* * *

Советски районри Ваҫкасси ҫамрӑкӗ Леонид Иванов ытти воинсемпе пӗрле Псков шурлӑхӗ патне ҫитнӗ. Унӑн юлташӗсем анчахрах ҫар шкулӗнче пӗрле вӗренӗскерсем пулнӑ. Вӗсем пулас ҫапӑҫу ҫинчен шутланӑ, калаҫнӑ, шӳт тунӑ. Анчах тӑшмана пӗтересси ҫӑмӑл маррине вӗсем пурте аван пӗлнӗ.

Тепӗр ирхине Иванов хӑйӗн юлташӗсемпе пӗрле фронт линийӗ патнелле ҫывхарнӑ. Снаряд е мина ҫурӑла-ҫурӑла кайнӑ. Тӑшман хӑйӗн окопӗсенчен автоматсемпе калаҫнӑ. Тӑшман парӑнма шутламан, хаяррӑн хирӗҫ тӑнӑ.

Ивановӑн хӑшпӗр юлташӗсем вилнӗ. Иванов умӗнчех кӳршӗ ял ҫынни — Сосновкӑри Тимофей Куприянов вилет. Автоматне ҫирӗпрех пӑчӑртать те, хӑрах аллине граната тытса, Иванов шӑппӑн ҫеҫ калать: «Шел, юлташӑм. Лайӑх ҫапӑҫаттӑнччӗ... Канлӗн ҫывӑр. Тӑван ялна эсӗ геройла вилни ҫинчен пӗлтеретӗп». Куприяновӑн сарлака кӑкӑрӗ ҫинче юн кӳлленсе тӑнӑ. Чӗри тӗлӗнчи «За боевые заслуги» медалӗ хӗвел ҫуттипе нихӑҫан сӳнмен ҫӑлтӑр пек ҫиҫсе тӑнӑ. Ивановӑн чӗри хыттӑнрах шаккама пуҫланӑ. Вӑл тепӗр хут хӑйӗн герой юлташӗ ҫине пӑхса илнӗ те, мӗнпур вӑйран кӑшкӑрса, малалла чупнӑ:

— Юлташсем! Земляк Тимофейшӑн малалла! Урра!

Пилӗк совет салтакӗ икӗ теҫетке нимӗҫ ҫине ыткӑннӑ. Автоматсенчен черет хыҫҫӑн черет кӑларса янӑ, гранатӑсем вӑркӑнтарнӑ. Нимӗҫсем хӑраса каялла чакнӑ, тыткӑна парӑннӑ.

Иван хӑйӗн юлташӗсемпе часах таврӑннӑ. Вӗсем пуян трофейсем тата «чӗлхесем» илсе пынӑ.

Тепӗр кунӗнче Ивановшӑн савӑнӑҫлӑ самант пулнӑ. Вӑл партие кӗнӗ тата ҫапӑҫура хастарлӑх кӑтартнӑшӑн ӑна «За отвагу» медаль панӑ.

Леонид Иванов, правительствӑн икӗ наградине — «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» орденӗпе «За отвагу» медаль илнӗскер, халӗ те Латви ҫӗрне ирӗке кӑларнӑ ҫӗрте ҫапӑҫать.

Ваҫкасси ял ҫыннисем паттӑр йӗкӗте Леонид Иванова, комсомол вӗрентсе ӳстернӗскере, сывлӑх сунса саламлаҫҫӗ.

ЯКОВ СИГАЙ.

* * *

Гварди минометчикӗсем Верховный Главнокомандующин Сталин юлташӑн приказне вуланӑ. Ҫапӑҫура пиҫӗхнӗ воинсем тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗшӗн, унӑн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пурнӑҫа шеллемесӗр ҫапӑҫма тупа тунӑ.

Боецсем умӗнче полкӑн ялавӗ ирхи хӗвел шевлипе ялкӑшса хумханнӑ. Шӑмӑршӑ районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз ҫамрӑкӗн Иван Купташкинӑн ҫапӑҫура пиҫӗхнӗ аллисем тытса тӑнӑ вӑл ялава. Унӑн анлӑ кӑкӑрне «Хӗрлӗ Ялав» орденӗпе «За боевые заслуги» медальсем илемлетнӗ.

— Тупа тӑватӑп, — тенӗ ялавҫӑ, — ҫак ялава ҫӗнтерӳ тӑвиччен ӳкермӗп.

...Смоленск хулине нимӗҫсенчен тасатса ирӗке кӑлармалли приказа илнӗ чухне Иван Купташкин командир пулса тӑракан миномет расчечӗ хуларан 8 ҫухрӑмра тӑнӑ. Приказа пурнӑҫлас тесен, тепӗр сехетрен хула ҫумӗнче пулмалла.

Командир умне Бурнайкин боец пырса тӑнӑ:

— Вӑрман хӗрринче нимӗҫ старостин икӗ лаши пур, — пӗлтернӗ боец.

Командир шухӑшӗ ҫинех пулнӑ ку хыпар. Тата вунӑ минутӑран тарма хатӗрленнӗ нимӗҫ старостин лашисем минометчиксем патӗнче пулнӑ. Урапа хыҫӗнченех командир умне туясемпе сенӗксем тытнӑ виҫ-тӑватӑ колхозница пырса тӑнӑ.

— Тавтапуҫ сире, тӑванӑмӑрсем — йӗпеннӗ куҫӗсене тутӑр вӗҫӗпе типӗтсе сӑмахланӑ вӗсенчен ватӑраххи, — сире чун пек кӗтнӗ эпир.

— Ирсӗр йытӑсем йӑлтах ҫаратрӗҫ пире, ывӑл-хӗрсене Германие ӑсатрӗҫ, ним айӑпсӑрах вӗлерчӗҫ...

Минометчиксен васкамалла. Вӗсем колхозницӑсене староста лашисене тупма пулӑшнӑшӑн тав тунӑ та малалла кайнӑ.

Палӑртнӑ вӑхӑтра Иван Купташкинӑн миномет расчечӗ хула ҫумӗнче тӑшманпа вут чӗлхипе калаҫма пуҫланӑ. Смоленск хули урамне чи малтан кӗрсе кайнӑ. Ҫак ҫапӑҫу хыҫҫӑн Иван Купташкин кӑкӑрӗ ҫинче «Хӗрлӗ Ялав» орденӗ ҫуталнӑ.

Ярцево хулишӗн пынӑ хаяр ҫапӑҫура расчет наводчикне — рядовой Манулкина тӑшман снарячӗн ванчӑкӗ пырса ҫапнӑ. Минӑсем парса тӑракан Бурнайкинӑн хулне те амантнӑ, вара Иван Купташкин виҫӗ сехет ытла тӑшмана хирӗҫ пӗр пӗччен ҫапӑҫнӑ. Тӑшманӑн пульли ӑна ӑнсӑртрӑн амантнӑ, анчах минометне пӑрахса ҫапӑҫу хирӗнчен тухман вӑл.

Ҫав ҫапӑҫура Купташкин командир пулса тӑракан минометчиксен расчечӗ тӑшманӑн 40 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 6 пулемета, 2 миномет батарейине пусарса лартнӑ.

В. ЛЮБИМОВ.

Лаша ӗрчетес ӗҫӗн ылттӑн фончӗ

Паян Шупашкарта республикӑри ипподром хӑйӗн ӗҫне ҫӗнӗрен пуҫласа ярать. [illegible]

1943 ҫулхи май уйӑхӗнчен вара, ҫак постановлени пичетлесе кӑларнӑ хыҫҫӑн, [illegible]

Республикӑри ипподром ӗҫленӗ вӑхӑтра колхозсемпе совхозсен тата ытти хуҫалӑхсен ӑратлӑ ӑйӑрӗсемпе кӗрисем ӑмӑрту витӗр тухаҫҫӗ. Пирӗн республикӑра лаша ӗрчетес ӗҫре ҫав лашасем ылттӑн фонд пулса тӑраҫҫӗ.

Паянхи ӑмӑртӑва пирӗн республикӑри лашасем чылай хутшӑнаҫҫӗ. Етӗрне районӗнчи «Борец» колхоз хӑйӗн «Аван» ятлӑ ӑйӑрне илсе килнӗ. Ҫак ӑйӑр, 1940—1941 ҫулсенче Мускаври ӑмӑртура пулса, паха тӗслӗхсем кӑтартрӗ. Сӑр шывӗ леш енчи лаша завочӗ 8 лаша илсе килнӗ. Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз «Битва» ятлӑ кӗсрине илсе килнӗ. Вӑл Европӑра рекорд илнӗ вырӑс рысакӗн, «Крепыш» ятлӑскерӗн, йӑхӗнчи лаша. Ҫав «сарӑ улӑп» текен «Крепыш» 1908-мӗш, 1910-мӗш ҫулсенче Мускавра, Парижра тата Европӑри государствӑсен ытти столицисенче те пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. 1600 метра вӑл 2 минута та 8 секундӑра юртса тухнӑ. Ӗлӗкхи вӑхӑтри хакпа та вӑл 100.000 тенкӗ тӑнӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланас умӗн Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкине пирӗн государство завочӗсенчен пӗри «Улав» ятлӑ ӑйӑр илсе пынӑ. Вӑл вырӑс лашисен йӑхӗнчен пулнӑ. 1600 метра вӑл 2 минута та 2 секундӑра юртса тухнӑ. Ҫапла вара ӗлӗкхи «Крепыш» рекорчӗнчен иртме чӗрӗк ӗмӗр ытла вӑхӑт кирлӗ пулнӑ.

Ҫак сезонра республикӑри ипподром витӗр тухакан пирӗн республикӑри колхозсен ӑратлӑ лашисем вырӑс тата вырӑспа акӑлчан йӑхӗсенчен пулнӑ. Вӗсенчен ытларахӑшӗсене Сӑр леш енчи лаша завочӗ пӑхса ҫитӗнтернӗ. Ҫапла вара республикӑри лашасене сӑнамалли кун лаша завочӗшӗн те экзамен пулса тӑрать. Ҫакӑ вӑл пирӗн республикӑри лашасен йӑхне, вӗсен юртас пахалӑхне кӑтартса парас тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнать. 1943 ҫулта лаша завочӗ 45 кӗсререн 44 тиха илсе вӗсене пӗтӗмпех пӑхса ҫитӗнтернӗ. 1944 ҫулта 46 кӗсререн 46 тиха илнӗ. Тихасене ҫитӗнтерес тӗлӗшпе пирӗн республикӑри нумай колхозсем Сӑр леш енчи лаша заводӗнчен вӗренме пултараҫҫӗ. Пирӗн колхозсен ытларах тиха илсе, вӗсене тӗрӗс пӑхса ҫитӗнтерессишӗн кӑтартуллӑн ӗҫлемелле. Мӗншӗн тесен, хальхи вӑхӑтра ялхуҫалӑх ӗҫӗнче лаша питӗ пысӑк вырӑн йышӑнать. Нимӗҫ оккупанчӗсене аркатса тӑкас ӗҫре те лаша Хӗрлӗ Ҫаршӑн питех те паха пулса тӑрать.

Г. МАРТЫНОВ,
ВКП(б) Обкомӗн секретарӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен заместителӗ.

Францири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

Союзниксен экспедицилле вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ пӗлтерни

ЛОНДОН, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ сентябрӗн 1-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Бовэ хули районӗнчен ҫурҫӗр еннелле куҫса пырса, союзниксен ҫарӗсем ӗнер Амьен хули патне ҫитнӗ, вара Сомма шывӗ ҫинче тӑшмана тапӑнмалли ҫирӗп укреплени тунӑ. Малалла куҫса пынӑ май союзниксен ҫарӗсем темиҫе хула туртса илнӗ.

Руан хулипе Дьепп хули хушшинче Тот хулине ирӗке кӑларнӑ. Ӗнер тыткӑна илнӗ ҫар ҫыннисем хушшинче нимӗҫсен 7-мӗш армийӗн командующийӗ пур.

Бовэ хули районӗнче союзниксен танковӑй чаҫӗсем, Брешь шывӗ тӑрӑх ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнелле куҫса пырса, Брель тата Фукероль хулисене туртса илнӗ. Парижран ҫурҫӗрелле наступлени туса пыракан союзниксен ҫарӗсем Креп хулине туртса илнӗ, вара унтан малалла Армон хули патнелле кайнӑ. Разведка отрячӗсем Компьен хули патне ҫитесси кӑшт кӑна юлнӑ.

Реймс хулинчен ҫурҫӗрелле тата хӗвелтухӑҫнелле наступлени туса пыракан союзниксен ҫарӗсем хӑшпӗр пунктсенче 10 миля малалла кайнӑ. Ытти отрядсем Лаон хулине кӗнӗ. Халӗ ҫав хулара хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Труа хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре кӗрешекен чаҫсем хӑшпӗр пунктсенче 20 миля ытла малалла кайнӑ.

Бретаньре союзниксен ҫарӗсем Брест хулине пӗтӗмпех ҫавӑрса илеҫҫӗ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн вӑрҫӑ объекчӗсене чылайӗшне тапӑннӑ.

Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пӗлтернисем

ЛОНДОН, августӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Италире, фронтӑн Адриатика секторӗнче, 8-мӗш армин патрулӗсем анлӑ фронтпа Фольа шывӗ урлӑ каҫнӑ. Кунта тӑшман Фольа шывӗн ҫурҫӗр хӗррипе пыракан «Гот линийӗ» ҫинчи позицисене йышӑнса тӑрать, союзниксене хирӗҫ хытӑ тӑрать. Аппенин тӑвӗсен куҫса ҫӳреме йывӑр секторӗнче Урбино хулине туртса илнӗ. Понтассиеверен ҫурҫӗртерехре тӑшман 8-мӗш армин чаҫӗсене хирӗҫ вӑйларах хирӗҫ тӑма пуҫланӑ, анчах та союзниксем ҫӗнӗ паха позицисем туртса илнӗ. 5-мӗш армин секторӗнче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Кӑнтӑр Францире 7-мӗш армин чаҫӗсем Роно шывӗн улӑхӗпе ҫурҫӗр еннелле малалла куҫса пыраҫҫӗ. Ривьерӑра Америка ҫарӗсем Ницца хули урлӑ хӗвелтухӑҫнелле куҫнӑ. Альпы тӑвӗсенче Итали чиккинчи ту каҫҫисем ҫывӑхӗнче тӑшман ҫарӗсем самаях вӑйлӑ хирӗҫ тӑраҫҫӗ.

Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс авиацийӗ пӗр пин ытла вӗҫев тунӑ.

* * *

ЛОНДОН, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ сентябрӗн 1-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Марсель хули ҫывӑхӗнчи Ратонно тата Помег утравӗсем ҫинчи нимӗҫ гарнизонӗсем парӑннӑ.

Италире, фронтӑн Адриатика участокӗнче, 8-мӗш арми чаҫӗсем вӑйлӑ хирӗҫ тӑракан тӑшманпа Фольа шывӗнчен ҫурҫӗртерехри ҫӳллӗ вырӑнта ҫапӑҫаҫҫӗ.

Аппенин тӑвӗсенчен хӗвеланӑҫнерехре 8-мӗш армин ытти чаҫӗсем ҫаплах «Гот линийӗ» патнелле куҫса пынӑ.

Кӑнтӑр Франциере Лион хулинчен 55 миля кӑнтӑртарахра Америка ҫарӗсем Валанс хулине туртса илнӗ. Каялла чакакан тӑшмана союзниксен ҫарӗсем вӑйлӑ хӗссе пыраҫҫӗ. Кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле Испани чикки еннелле тата Рона шывӗ хӗррипе хӗвеланӑҫнелле куҫса пыракан француз чаҫӗсем Монпелье, Безье тата Нарбонн хулисене ирӗке кӑларнӑ.

Ӗнер истребительсем Румынири Регин аэродромне тапӑннӑ. Тӑшманӑн ҫӗр ҫинчи 60 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Халӗ паллӑ пулнӑ тӑрӑх, союзниксен авиацийӗ августӑн 30-мӗшӗнче тӑшманӑн ҫӗр ҫинчи 97 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Бомбардировочнӑй авиаци тӑшманӑн Францири, Италири тата Югославири вӑрҫӑ объекчӗсене пыра-пыра ҫапнӑ.

Союзниксен Францири ӗҫӗсем ҫинчен Эйзенхауэр генерал тунӑ доклад

ВАШИНГТОН, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫар министерстви союзниксен ҫарӗсем Ҫурҫӗр Франциере июнӗн 6-мӗшӗнче пырса кӗнӗ вӑхӑтран пуҫласа августӑн 25-мӗшӗччен унта тунӑ ӗҫсен результачӗсем ҫинчен Эйзенхауэр генералӑн докладне пичетлесе кӑларнӑ.

«Тӑшманӑн 5 бронетанковӑй дивизине пӗтерсе тӑкнӑ, 6 дивизине, ҫав шутра пӗр бронетанковӑй гренадерски дивизине аркатса тӑкнӑ, — тенӗ докладра. — 20 пехотнӑй дивизине аркатнӑ, 15 дивизине хытӑ лӳчӗркенӗ, ҫак дивизисем пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Аркатса тӑкнӑ пехотнӑй дивизисем хушшинче тӑшманӑн парашютлӑ чи лайӑх виҫӗ дивизийӗ пур. Кунсӑр пуҫне, парашютлӑ пӗр дивизи тата икӗ пехотнӑй дивизи Бретань ҫурутравӗнчи ҫирӗплетнӗ пунктсенче хӑйсене ҫавӑрса илнӗ, ункӑран татса тухайрас ҫук. Пӗр пехотнӑй дивизие Ла-Манш проливӗнчи утравсем ҫинче татса илнӗ.

Тӑшманӑн мӗн пурӗ 400.000 ҫын ытла вилнӗ, аманнӑ тата тыткӑна лекнӗ, ҫав шутра 20.000 ҫын ытла тыткӑна лекнӗ. Тыткӑна лекнисен хисепӗ ӳссех пырать.

Тӑшманӑн 1.300 танкне тата 20.000 автомашинине ытла тытса илнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Хупӑрласа илнӗ хулана персе тӑмалли 500 туппа яхӑн тата 1.500 хир туппипе ытти йывӑр тупӑсене тытса илнӗ е юрӑхсӑра кӑларнӑ. Кунсӑр пуҫне, тӑшманӑн ҫыранри артиллерийӗ нумай пӗтнӗ.

Германин 7-мӗш армийӗ тата ҫӗнӗрен йӗркеленӗ 5-мӗш бронетанковӑй армийӗ калама ҫук пысӑк поражени тӳснӗ. 1-мӗшпе 15-мӗш армисен тӗп пайӗсем те ҫавӑн пекех пысӑк пораженисем тӳснӗ. Аманнӑ пирки Германин виҫӗ фельдмаршалне тата пӗр арми командующине ҫартан киле янӑ е вӗсем ҫарта тӑма юрӑхсӑр пулса тӑнӑ. Пӗр арми командующине, 3 корпус командирне, 15 дивизи командирне тата пӗр крепость гарнизонӗн командирне вӗлернӗ е тыткӑна илнӗ.

Июнӗн 6-мӗшӗнчен пуҫласа сывлӑшра Германин 2.378 самолетне, ҫӗр ҫинче 1.167 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Кунсӑр пуҫне тата 270 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ пуль тата ҫӗр ҫинче 1.800 самолетне сиенленӗ пулмалла.

Ҫурҫӗр Франције пирӗн ҫарсем пырса кӗричченех тӑшман мухтанатчӗ: десант антарма памастӑп тетчӗ, анчах та хӑй союзниксен ҫарӗсене Ҫурҫӗр Франције пырса кӗме хытах чарайманӗ. Тӑшман союзниксен суднисен караванӗсене атакӑланисене нумай чухне сирсе янӑ, союзниксен флочӗн суднӑсем нумай пӗтмен. Тӑшман флочӗн 300 карапӗ пӗтнӗ, вӗсене е шыва путарнӑ, е питӗ хытӑ сиенленӗ. Кунсӑр пуҫне тата тӑшманӑн суту-илӳ суднисене нумай путарнӑ тата нимӗҫсен хӑйсеннех хӑйсен гаванӗсенчех тӗрлӗ йышши суднӑсене — «вӑрҫӑ суднисемпе суту-илӳ суднисене» — нумай путарма тивнӗ.

ГРЕЦИ ХАЛӐХӖН ИРӖКЛӖХ ҪАРӖН ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

СТАМБУЛ, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта илнӗ хыпарсем тӑрӑх, августӑн 21-мӗшӗнче грек партизанӗсен отрячӗсем Итерини хулине кӗнӗ. Партизансем нимӗҫсен тата итальянец-фашистсен казармисене аркатса тӑкнӑ, вырӑнти жандармерие хӗҫпӑшалсӑрлантарнӑ. Трофейсем тытса илнӗ. Скиари хулипе Петриа хули хушшинчи чугун ҫул ҫинче партизансем тӑшман ҫарӗсемпе вӑрҫӑ хатӗрӗсем тиесе пыракан поезда сирпӗнтерсе янӑ. Вара ҫак ҫул ҫинче 18 сехет хушши поездсем ҫӳреме пултарайман.

Каристос секторӗнче, боеприпас ҫитмен пирки, Греци халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн чаҫӗсем ҫӗнӗ позицисем ҫине чакнӑ.

СЛОВАКИРЕ ВӐРҪАРИ ПЕК ЛАРУ-ТАРУ ТУСА ХУНӐ

ЖЕНЕВА, августӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Словакин пуканелле «президенчӗ» Тисо Братислав хулинчи радио тӑрӑх сӑмах тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл ҫакна ирӗксӗрех йышӑннӑ: партизансем тата вӗсемпе пӗрлешнӗ ҫарти уйрӑм ушкӑнсем, хресченсем, ремесленниксем тата ыттисем те пӑлхав пуҫласа ячӗҫ, тенӗ.

ЛОНДОН, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Чехословаки влаҫӗсем пӗлтернӗ хыпарсене парать. Ҫав хыпарсем тӑрӑх, Словакире Чехословаки патриочӗсемпе нимӗҫсен оккупаци ҫарӗсем хушшинче хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Жилина, Трнава тата Галанта хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех тата Лученец, Левоча тата Кезмарок хулисемшӗн ҫапӑҫаҫҫӗ. Чехословаки патриочӗсем Жилина хулине малтан хӑварнӑ пулнӑ, халӗ вӗсем ҫав хулана каллех туртса илнӗ.

БОЛГАРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРАНТАН ТУХНӐ

ЖЕНЕВА, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарин премьер-министрӗ Багрянов паян радио тӑрӑх Болгари правительстви вырӑнтан тухни ҫинчен пӗлтернӗ. Унтан Багрянов ҫапла каланӑ: ҫӗнӗ правительство тӑвиччен государство ӗҫӗсене ертсе пыма манӑ хушрӗҫ, тенӗ.

ШТЕТТИН, КЕНИГСБЕРГ, БЕРЛИН ТАТА ГАМБУРГ ҪИНЕ БОМБӐСЕМ ПӐРАХНИ

ЛОНДОН, августӑн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗсем августӑн 30-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Германие тапӑннӑ. Пуринчен те вӑйлӑрах Штеттинпа Кенигсберг хулисене атакӑланӑ. «Москито» йышши самолетсен соединенийӗ Берлинпа Гамбурга тапӑннӑ.

ФРАНКФУРТ, КИЛЬ ТАТА БРЕМЕН ХУЛИСЕМ ҪИНЕ БОМБӐСЕМ ПӐРАХНИ

ЛОНДОН, августӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: августӑн 31-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле акӑлчансен «Москито» йышши самолечӗсем Франкфурта тапӑннӑ.

Американецсен «Вӗҫекен крепость» йышши самолечӗсен пысӑк соединенийӗсем августӑн 30-мӗшӗнче кӑнтӑрла ирттсен Киль хулипе Бремен хулинчи объектсене тапӑннӑ.

КӖСКЕН

* Пӗтӗм ҫурҫӗр Италийӗпех Итали патриочӗсемпе Муссолинин фашистла чернорубашечникӗсен отрячӗсем хушшинче ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Нимӗҫсем пулӑшаҫҫӗ пулин те, чернорубашечниксем повстанецсен юхӑмне пусарма пултараймаҫҫӗ.

* Августӑн 26-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле союзниксен ҫарӗсем Далмаци ҫыранӗ хӗрринчи Корчула утравне пырса тапӑннӑ. Ҫак тапӑнура нимӗҫсен темиҫе артиллери батарейине тата темиҫе боеприпас складне пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшман пачах та хирӗҫ тӑман.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
сентябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа
КУНСЕРЕНЕХ
А. П. Чеховӑн «Свадьба» ятлӑ
произведенийӗ тӑрӑх тунӑ
илемлӗ ҫӗнӗ фильм
«СВАДЬБА»
кӑтартать.
Сеанссем ҫак вӑхӑтра пуҫланаҫҫӗ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ӗҫлеме тытӑнать.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6, 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00680